


— Мӗн шырзса ҫӳрет-ши ку ӳсӗр Иванов?
— Ара Иванев нумай пулмаст̆ партти сӑнне ҫухатнӑ тетӗҫ, ҫавна шырат̆ ӗнте.

# Сарлака ђӗрелле Путылккӗн.

Хӑй вӑхӑтӗнђе Путылккӗн пит хисеплӗ ҫын пулнӑҫке. Пуринђен ытларах ӑна пуйантрах мушиксем хисепленӗ.

Утса пырађђӗ Путылккӗн урампа, портфӗлӗ ђӑматан пек, ҫынна пысӑк ҫын пек кӑтартатӑ.

Пӗр-пӗр Тит Титтӑђ Путылккӗна айакранах куратӑ те, хирӗҫ ђупса тухатӑ:

— Е е, ырӑ хӑна. Нађђас кӗрсем ара. Ђей ӗҫкелӗпӗр. Калаҫӑпӑр, тет.

Путылккӗн йури кӗресшӗн мар пек пулатӑ:

— Ҫапла, ҫапла. Хуларан пит кирлӗ инструкси килђӗ. Ӗҫ нумай, тет, анђах кӗме соклаҫ паратӑ.

Ҫын пӗтӗм ђӗререн ђӗнет пулсан, мӗншӗн кӗрес мар-ха—ђей ӗҫсе шухӑшсене ҫӳлелле хӑпартса йамашкӑн кӗмеллех ӗнтӗ.

Путылккӗн нихҫан та портфӗлсӗр ҫӳреместђӗ.

Пӗрре унӑн портфӗлӗпе вӑтанмалли пулнӑ. Вӑл ҫав ҫур пӑт туртакан йапалана сӗтел ҫине хунӑ мӗн. Сӗтелӗ ҫинђе сӑмаварсӑр пуҫне урӑх нимле куҫа килӗшмелле йапала та пулман. Ђей ӗҫсе ларнӑ пулатӑ Путылккӗн. Хуҫан пӗр ађи ђей шывне тӑкнӑ йанӑ. Ђей шывӗ усалланса Путылккӗнӑн хисеплӗ портфӗлӗ айне кӳлленсе кӗнӗ кайнӑ.

Путылккӗн портфӗлне аллипе ҫӗклесе илме хӑтланнӑ та, ҫӗре анса ӳкнӗ.

Питӗркӗҫ тавраш ӗсем уҫӑлса кайнӑ та, ҫав йапала ӑшӗнђен тӗрлӗ хӗтӗр-хатӗр тухса выртнӑ

Унта тапак хутаҫҫи те, йуратмалла мар шӑршӑ кӑларакан ђӑлхасем те, тата ытти килти шӑкӑр-макӑр та пулнӑ.

Путылккӗн колхосри хӗрлӗ кӑшман пекех хӗрелсе кайнӑ анђах нумай вӑтансах тӑман.

— Кусене хаљ ҫеҫ хунӑ,—тенӗ вӑл. — Ахаљ ђухне епӗр портфӗл ӗшне лайӑхрах йышши ассортимент ђиксе ҫӳретпӗр.

Хуҫисем ҫав ассортимент тенӗ сӑмаха тӑнланса илеймен, конешнӑ, анђах уншӑн тавлашса мӗн тӑман.

Анђах епӗр ҫав йапала—портфӗл ҫинђен каламастпӑр-ха.

Епӗ сире ҫав ҫынӑн пит ырӑ кӑмӑлӗ ҫинђен каласа парасшӑн.

Пит ырӑ кӑмӑлсӑр пуҫне тата Путылккӗнӑн ђейелӗхӗ вӑрҫӑ вӑхӑтђенхи тилӗн ђейелӗхӗ пекех пулнӑ.

Ҫав хӑйӗн пит ырӑ кӑмӑлӗ пирки Путылккӗн йалти кӑмӑлсӑр йулнӑ ҫынсемпе —тӗреклӗ пурнакан мушиксемпе туслашма йуратнӑ; сирӗн пек калас пулсан, кулаксемпе туслашма йуратнӑ ӗнтӗ. Ахалех хайӗн кӑмӑлӗ пит ырӑ пулнӑ пирки ҫех вӗсемпе туслашма йуратнӑ.

Ҫавӑн пек ҫынсем патӗнђе Путылккӗн ђи ђыслӑ хӑна пулнӑ, туйра та, менелнӗк ђухне те, ҫын пытарнӑ мӗн ђухне те.

Акӑ ҫапла калатђӗ вӑл:

— Латӑнне еп йуратмастӑп, акӑ ҫакна тетђӗ те, ђетвӗрт кӗленђи ҫине пӑхса куҫне хӗсетђӗ.

Хуҫи ҫавӑнтах сӗнме тапрататӑ.

— Ах, ырӑ хӑна, пӗр стакканне ӗҫсе парха тархасшӗн...

Путылккӗн пӗрине ӗҫсе паратӑ, хӑш ђух иккӗшне те, хӑш ђух тата пӗтӗм тӳшӗнне те.

Хырӑмӗ унӑн темиҫе витре кӗрекен йышшискер пулнӑ.

— Вӑт,—тетђӗ вӑл,—йепле епӗ пуринпе туслӑ—йулташлӑ. Никама та епӗ ҫилентермен, тетђӗ.

Хырӑмра пӑтрашма пуҫланипе вӑл хӑсма ты тӑнсан вара пурте тупӑшсах шайкка илме ђупатӑ ђӗҫ. Шайккине хӑшин илсе пырас пирки кӑшта тӳпелешсе каймастђӗҫ.

Пирӗн йал, калас пулатӑ, хуларан темиҫе ҫух рӑмра ларатӑ.

Пирӗн патран хулана пӗр 60 ҫухрӑм пула пулӗ. Километтӑрпа шутласан шутне те пӗлес ҫук

Хулари влаҫ ширӗн пата сайра хутра ҫеҫ кӗр келесе кайатђӗ.

Хӑйӗн кӑмӑлӗ пит ырӑ пулнӑ пирки Путылк кӗн хулари влаҫсемпе те шутсӑр туслӑ пулнӑ.

Пуринпе те алӑ тытатӑ, ҫак йышши сӑмах сем сирпӗтет анђах:

— Сыв пултӑр... Толой .. тет, тата ҫавӑн йыш ши ытти сӑмахсем калатӑ.

Тӗреклӗ пурнакан мушиксем ҫине ҫавӑн пек ђух куҫпа та пӑхмастӑ.

Хуларан килнине хул айӗнђен тытатӑ те, ҫакӑн пек пуҫласа паратӑ:

— Конкретно... Собственно говоря... Пирӗн пит хӑрушӑ клас кӗрешӗвӗ пур,.. тет.

Тӗреклӗ пурнакан мушиксем Путылккӗн ҫине ҫиленме тапратаҫҫӗ:

— Лайӑх мар, лайӑх мар вӑл, теҫҫӗ.—Есӗ хуларисем умӗнђе пирӗн ҫине ҫаврӑнса та пӑхмастӑн. Епӗр те ҫынсем вӗт, ђунлӑ йапаласем анђах мар вӗт, теҫҫӗ.

Путылккӗн хулпуҫҫине хутлатса илет:

— Мӗнле сирӗн ӑс-пуҫсем тӗттӗм. Ђухламастӑр есӗр ман тактӗккӑна... тет.

Ҫав тӑнланмалла мар сӑмаха илтсессӗн пурте шӑп пулаҫҫӗ.

Пӗрре хуларан влаҫсем килнӗ; паллах, вӗсем совет суйлавӗсем пирки килнӗ.

Пӗтӗм халӑх ҫпискине пӑхса тухнӑ та вӗсем, тӗреклӗ пурнакан мушиксене ђылайӗшне суйлав прависӗр хӑварнӑ.

Путылккӗн ҫав ӗҫе темле куҫпа пӑхнӑ—пӗлмелле мар.

Те хуйхӑрнӑ, те хӗпӗртенӗ—паллӑ мар.

Хулари влаҫсем миттӗнк тунӑ, калаҫкаланӑ та, кайнӑ.

Суйлав тивӗҫлӗхӗсӗр хӑварнисем пурте Путылккӗн патне персе ҫитнӗ:—Есӗ пит ырӑ кӑмӑлласкер, есӗ пирӗн хута кӗр... теҫҫӗ.

— Есӗр пӗлетӗр вӗт ман тактӗккӑ. . тесе алӑпа сулнӑ мӗн Путылккӗн, анђах лешсем:

— Тактӗккӑ вӑл тактӗккӑ пултӑр, ҫапах есӗ епӗр саншӑн мӗнле ҫынсем пулнине пӗлтерсе ҫыр, тесе аптӑратнӑ.

Тапӑнса ҫтена ҫумнех пӑђӑртса лартнӑ теме пулатӑ. Вӑл сӗтел хушшине ларнӑ та, руђкине ђернил ӑшне пусса илсе, ђи тӗреклӗрех пурнакан мушикне сирӗн пек калас пулсан, кулака, Кулӗн хушаматлине сайавлени ҫырса панӑ. Пит лайӑх ҫырнӑ. Ыррине тем-тем каласа ҫырнӑ.

— На, тенӗ Путылккӗн,—хам кӑмӑл пит ырӑ пирки епӗ сан хута кӗретӗп. Йађейккӑ ҫекреттарне ан ман.

Ыттисене ҫапла каланӑ:

— Урӑх ҫырма пултараймастӑп. Хама хакла ларӗ. Тепӗр уйӑхран кӗрсе пӑхӑр, тенӗ.

Ҫавӑн хыҫҫӑн вара Путылккӗн тӗлне инкек ҫине инкек киле пуҫланӑ. Хуларан комиҫҫи персе ҫитнӗ те, Путылккӗна пӑшӑрхантарма тапратнӑ.

— Кулăка суйлав тивĕçлĕхĕ таварса памашін есĕ реккоментатси пани? теççĕ.
Ниçта кайса кĕмелли те çук.
— Епĕ, тет Путылккĕн. Хăйĕн сасси ҭĕтрет. Епĕ... Анҭах мана сăмах калама парăрха. Епĕ. . анҭах мана сăмах калама парăрха. Епĕ хулана рăххи те йанăҭĕ.
Путылкĕн пиншак кăсйинҭен хут татăкки туртса кăларать.
— Вуласа пăхăр. Çакă епĕ сирĕн пата хам ырса йанă çырун коппийĕ, тет.
Хуҭĕ çине Путылккĕн: Кулĕн кулака суйлав тивĕçлĕхĕ кайалла таварса пама йурамасть, тесе çырнă.
Комиççи калать:
— Çук, епĕр ун пек хут илмен, тет. — Кам ла çырса йанă?
Путылккĕн пуçне çĕклесерех йаҭĕ.
— Кам çырнă тетĕри? Конешнă епĕ... Хам опҭĕнни пуçпа...
— Çук ил.ен... теççĕ те, пуçĕсемпе сулаççĕ.
Путылккĕн çĕре лаҭ! сурҭĕ, комиççийĕ мĕн пухăшланине тÿрех тăнланса илеймерĕ:
— Поҭтăра çухатнă пулмалла. Мĕншĕн укçа илсе тăраççĕ-ши? терĕ.
Комиççи каллех ăна тапăнать:
— Каласа парха, лайăх краштанин, мĕнле есĕ пĕр çыншăнах—хутне кĕрсе те, ăна хирĕç те çыратăн? Пĕлес килеҭҭĕ, теççĕ.
— Вăл ман тактĕккă, тесе каласшăн пулмалла Путылккĕн.
Апла калани тен пулăшатҭĕ те пулĕ. Анҭах ун апла пулман.
— Вăл ман... тенĕ те вăл, малалла мĕнле сăмах каламаллине астуса илеймест.
— Вăл сан икĕпиглĕхÿ пулать, тенĕ те комиççи, каллех ăна пур шăтăк-çурăк виттĕр кăларма пуçланă.
Иаҭейккă пухнă, унга мĕн пулни çинҭен хут çине лайăххăн çырса пама та хĕн. Хăйĕн кăмăлĕ пит ырă пулнă пирки вара Путылккĕн хăйĕн пур тусĕсене те çухатнă, тусĕсемсĕрех тăрса йулнă.
Тасатса кăларнă хыççăн тата комунисла партти пилеҭĕсĕр те тăрса йулнă.
Халь вăл йал тăрăх портфĕл тытса утса тухас пулсассăн, мăшкăласа пĕтереççĕ.

**Ваç Ҭуккуноз.**

# Мунҭа çук йалта

Ишек, Шурҭа, Тăрăн тавращĕнҭе мунҭасем йалĕпе те пĕрер-[illegible] çеç.. Çын се[illegible] хĕлле пу[illegible]ан, в[illegible]ра шыепа çеç пуçĕсене ç[illegible]ваççĕ.

*Филиппăв ÿкерҭĕкĕ.*



**Кăмака умĕнҭе çапăнни.**




**Мунҭари мар мунҭа**

# Самокриттĕк такмакĕсем

1, Нăрт-нарт! автопус—
Шупашкартан Канаша.
Васках хыпар, çитсе пус
„Капкăн“пала „Канаша“.

2. Çул тăршшинпех ана-ана
Автопусне тĕкрĕмĕр;
Самокри-и-ттĕккăна
„Пурнăçнелле“ кĕртрĕмĕр.

3. Кăштăртатат Атăлĕ —
Шур тутăрсем кÿресшĕн.
Хыпкаланат Ахтутур
„Ăйăр çуна“ кÿлесшĕн.

4. „Ăйăр çуна“—çил çунат
Автопуспа пĕр тăван;
Волоккитпа пÿрократ,
Тем кала та, пĕр тăван.

5. Волоккитне тыллама
Тимĕр тылă илгĕмĕр;
Пÿрократне аллама
Вĕтĕ ала илтĕмĕр,

6. Илес терĕм, кирлĕђĕ—
Хура хурçă хађăм пур,
Хађăран та çивĕђĕ,
Самокриттĕк, есĕ пур.

7. Ђĕрик-ђĕрик урапи
Анаталла хыт ђупат,
Волоккитђĕк хунани...
Уншăн тăшман ан çупат.

9. Кађђин-кађђин кађакин
Каçман карта çук та тăр.
Самокриттĕк икерђи—
Нам астивмен, хатĕр тăр!

9. Ват хурама силленет
Вăйлă çиле сиссессĕн,
Çамкамсенђе çил вĕрет,
„Тасатăва!“ тесессĕн.

10. Шур ђăлан та шур сехет
Çапас вăхăт çитрĕ пуђ;
Шур охвитсер, сан ђерет—
Сирпĕнессÿ çитрĕ пуђ.

11. И-и! Мускав кађђисем,
Пĕлетре-и пусăрсем?
„Ђăваш Хуçалăхĕнђен“*)
Илĕнђĕси кусăрсем?

12. Ђĕрик-ђĕрик урапа
Тикĕт сĕрмен тейеççĕ;
Ђăваш Кĕнеки уйрăмĕ
Ĕçне пĕлмен тейеççĕ.

13. Сакăр шăллă урапин
Кÿпђек хушши йакалнă;
Пирĕн каççир кĕсйисем
Супровккăпа йакалнă.

14. Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕлтĕркки
Çил ăçталла унталла;
Сашђитнĕксен хÿтлĕхĕ
Ăçта укса унталла.

15. Нăрт-нарт! кăвакал
Лапри-çĕпри тиркемест,
Пирĕн КОРППО çавнашкал
Çĕрĕк-марăк тиркемест.

16. Салакайăк пĕççисем
Тарса кĕђĕç кĕлете;
Сала ĕни сĕђĕсем
Хакне пеђĕç пĕлĕте.

17. Ђăх-ђĕп сойус ђăххисем
Кик! терĕç, как! терĕç;
Çуртран çурта куçса та
Ÿкрĕ-и-ха х а к? терĕç.

18. Вăрман урлă хурт кайрĕ,
Иуман хăвађ шыраса,
Шилкоопĕнђе хал кайрĕ
Рапођђисем шыраса.

19. Вăрман, хапрăк... тейетпĕр,
Токăвăрсем аллă та;
Вăрманçисем, тресĕсем
Токăвăрне маннă та.

20. Ђăрт-ђăрт! сранатти
Ик урана виç çуллăх.
Интустрийĕн сайомĕ —
Куппонĕсем 10 çуллăх.

21. „Анкĕлиский скорохот“
Çап-çут çунат урара;
Сайум вĕçрĕ пулпи хут
Пĕрђĕ йулми панккалла.

22. И-у!—терĕç ĕнисем..
Сăрханмаççĕ сĕђĕсем.
И-и! терĕç шефĕсем
Курăнмаççĕ ĕçĕсем.

23. Е-ей! пирĕн пахђанах
Çăхан йăва çавăрнă;
Ей-ей! Мами совхосне
Улпут йăва çавăрнă.

24. Пахђа курăк хушшинђе
Ђикенексем пулас çук;
Ушкăн хуçалăхсенђе
Кулак вађђи выран çук.

25. Хура лаша тейейсе
Ытла йывăр ан тийăр;
Вытвишентсă тейейсе—
Халех пуçа ан çийĕр.

26. Ы-ый! хурђăка есрелли,
Ђĕп çĕклеме вĕреннĕ!
Ый-ый пÿрократ есрелли,
Вытвишентса хĕстернĕ!

27. Хурђăкасем савнасси
Ђĕпсем ÿссе çитиђђен;
Пÿрократсем асасси
„Шур çурт“ мĕнне пĕлиђђен

28. Симĕс курăк улх-ути
Кукăђ варне ан хурăр
„Самокриттĕк—урути“;
Папкă ăшне ан хурăр.,

**Васанкка.**

*) Кулакла шухăш ниђĕтленĕ „Чувашское хозяйство“ шурнала калана.



## Тасалăхшăн тăрăшакан испађ

ХРЕСЂЕН. Ма вуламалли çурт çумне вывĕска çапмастăр?
ИСПАЂ. Вывĕска çапсан халăх пухăнса урайа вараласа кайасран хăратпăр.

Мами совхосĕнђе ăрэтлă ĕнесэм, пăхма пĕлмэн пирки, мэлтанхи ç/лхисэнђен шугласан халĕ 75 прођђăн таран сĕт ђакарни палăраĭ.



# ратлă ĕне.

ĔНЕ Мана сутаттăр пулсан та, Мами совхосне тархасшăн ан сутăрха. Сĕтсĕр ке йатне илтмелле ан пултăр.

## Страхховккă тўллекен.

Терентисэн Хветĕрĕ па не йалсовет претçетаттĕсынă:

— Çынсем страхховккăна такçачах тўлесе тат. Есĕ тўлемерĕн.

— Мĕнле страхховккă?

— Пушартан тўлемеллине?

— Ну?

— Мĕн «ну»? Пушар пулма пултараĭ.

— Ну, пултараĭ тейĕпĕр.

— Çунса кайсан укçа кирлĕ?

— Кирлĕ.

— Ну... апла пулсан тўлес пулаĭ.

— Ма тўлес?

— Пушартан сыхланма.

— Ма сыхланас?

— Ара, пушар пулма пултараĭ, тетĕн.

— Ну?!

— „Ну“!. мар çав...

— Пушарĕ вăл тасçан та тухĕ.

— Хăçан?

— Хăçанне пĕлместпĕр çав. Çавăнпа тўлес пулаĭ.

— Ма?

— Пушар пулсан пўрт-çурт çавăрма укçа илме.

— Пушар пулсан, тетĕн?

— Пушар пулсан илме тетĕп çав!

— Нэа! А пушарĕ пулмасан?

— Пулмасан... аван ĕнтĕ вăл.

— Мĕн аванни унта. Тўленĕ укçа пĕтетçке вара.

— Пĕтмест. Çуннă хресђенсене пулăшма каĭаĭ. Тўлемесен çуннисене пулăшмалли пулмасĭ.

— Мĕнле пулмасĭ? Страхховккă пухаççĕ вĕт.

— Пухаççĕ.

— Пухаççĕ пулсан çавăнтан тўлеççĕ.

— Çавăнтан тўлеççĕ те-ха. Анђах есĕ страхховккă тўлесшĕн марçке.

— Тўлесшĕн мар çав.

— Тўллемесен çуннисене ăçтан пулăшĕç?

— Страхховккăпа пухăннă укçараи пулăшĕç?

— Тўллемесен укçи пулмасĭ тетĕпçке!

— Ма пулмасĭ. Еп анђах тўлеместĕп, ыттисем пурте тўлеççĕ.

— Ыттисем те тўлемесен?

— Непойç, тўлĕç!

— Ыттисем те тўлемесен, çунса кайнă хыççăн сана пўрт-çурт çавăрма укçа памĕç.

— Уншăн хăрамалли çук—параççĕ. Укçасăр мĕнле пўрт-çурт çавăрăн. Параççех!

— Аçтан парĕç саппас пулмасан?

— Тўлемесĕр тытăнса тăракан хыт-кукарсене вăйпах тўлеттересе укçа туса парĕç. Вĕсенђен, шуйттансенђен, сăптăрмаллах! Сăптăрĕç те... Ахалĕн пирĕн çунса кайсан та пулăшусăр лараси? Ун пек шуйттансене хĕрхенмелле мар. Вăйпах илмелле...

Хуткупăс.

# Васкавлă ĕç.

(Фактпа пĕррех).

Райĕçтăвком (вулĕçтăвком тесен те йурат) çекреттарне, краштанин Пушçамкайĕва пĕр вăхăт пит киђем пулђĕ.

Усал пек машшинккă шатăртатат. Иунашарах ларакан теловот шăл ыратнипе асапланса мекерленет.

Киђем...

— Ех, пĕреххуг хут татки çырас штолĕ... терĕ те, аптранипе Пушçамкайĕв тытăнђĕ ђарлаттарма.

— Кăвапакасси краштанинне.

Трихвун Митраппанђа.

Шутсăр срођнă, ђикĕсĕр хăвăрт хăвăн çине хунă 03 пус штрава, тата 01 пус ленине тўлесе татма ыйтатăп. Пĕртепĕр тўллемесĕр ђăхăмласа тăрсан, уколовни котĕксемпе статйасем тăрăх ответ тытмалла пулат санăн...

РĔК çекреттарĕ Пишçамка.. (малалла йытă хўри пек кукăртнă).

— Ђăнкăр-р... тутарђĕ телехвон. — Алљо! Алло-о! Ман пата пĕр васкавлă ĕçпе срошнă милитсионер йарăр. Аха... Ес милитсионер? Вĕç кунта.

— Акă сана паккет, питĕ хăвăрт та тĕрĕс çитермелле... Пăнимал?

— Ăнлантăм, йулташ çекреттар.

— Асту, расписккăпа пар ес ăна. Пăнимал?

— Так тошнă, йулташ нађал... йулташ çекреттар. Вăккурат тăвăп.

Тухса сĕтĕрĕнђĕ вара милитси 5 çухрăмра ларакан Кăвапакассине. Утат утат те шухăшлат:

— Ура тупанĕсем ыратса пĕтеççĕ ĕнгĕ ку тумхахсем тăрăх утса.. Ура тупанĕ тата тарам... Аттине шел вĕт, каçонни... Каллех халăх пурлăхне пĕтеретĕн теме пултараççĕ...

... Çитрĕ.

— Трихвун Митраппанђ çакăнта пурăнати?

— Çакăнта...

— Ăна вальљи питĕ срошнă повескă пур, хăйнех памалла..

Арăмĕ трук хăраса ўкрĕ.

— Ай тур-тур-тур... Вăл хăй килте те çук... Вăрмана ĕçлеме карĕç...

— Манăн ĕç çук!—татса хуђĕ милитси. —Рас пама хушнă мана, парас пулат.

— Çветтуй турă амăшĕ, мĕнех тăвас ĕнтĕ... Пĕтрĕмĕр! Тен хутне мана парса хăварăни?

— Çук, йурамаст. Хăйĕн ал пусмалла, епĕ, Трихван Митраппанђă, повескăна срошнă илтĕм... тесе ал пусса памалла.

Усал ђăхлах кăт кăтиклама тапраттрĕ те Трихван арăмĕ, упăшкине ђĕнме вăрмана ђупрĕ.

— Трихван, сана тытма пулмалла милитси килђĕ, хут пурђĕ, парса хăвармарĕ.

— Мĕн çăви тума кирлĕ пулнă еп вĕсене?

— Пĕлместĕп. Халех милитсине пыма хушрĕ, кай ђасрах, хупса лартĕç тата.

— Вăг, шуйтан кĕтў. Кайас пулат, ĕç пăрахсах.

Ĕçе пăрахсах 12 çухрăма хулана сĕтĕрĕнђĕ.

— Сана, муђей, милитси кирлĕ и? Ав çавăнта кĕтесселле пăрăн та, шур çурт курăнсах ларат.

Пăлранкаласа çўресен, тупрĕ-тупрех милитси суртне. Хăй ма килнине каласа кăтартрĕ пĕрине.

— Трихвун йатлă тетĕниха есĕ? Çук, е... Трихвун йатлине никама та ђĕнмен. Трохвим ... лине ђĕннĕђĕ. А тен есĕ Трохвим пулĕ?

— Тупата Трохвим мар, ĕмĕртен Трих... теђĕç

— Апла пулсан сана РИК ђĕннĕ пуљ, у... йарапар. Ак, кĕтесрен пăрăнатăн та, сулахайа... унтан сылтăмалла, унтан тўрĕ урампа, вара ђи... хысĕнђе РИК пулат.

— Мĕнле РИК?

— Районни Исполниттĕлни Комиттет...

— Е-е..

Утрĕ Трихвун кăтартса йанă çĕре, ним т... та çук

— Мана ђĕннĕђĕ.

- - Кам ђĕннĕ? Ав, çав сĕтел патне ... Срошни ĕçсемпе çавăнта ђĕнеççĕ.

— Митраппанăв? Çук, сана епĕр ђĕнмен. М... рахванăва ђĕннĕђĕ. Ав, леш çав майра па... кайса пăх... Çĕлĕкне хывас пулат, ђиркўре... вĕт ес.

РĔК ре саџаттисем пĕтнĕ çĕре Трихвун ар... аран Пушçамкайĕв сĕтелли патне çитсе тухрĕ.

— Сана кам ђĕннĕ?

— Милитси. Арăма ђĕнме вăрмана йанă.

— Повескă пури?

— Çуккă... повескине милитси калле ... кайнă.

— Повескăсăр еп мĕн калăп сана? Иурам...

— Срошнă терĕ тет ха вĕт!

— Пулин. Куратни, вăхăт тăват сехет çи... Киле каймалла, пилĕк минут çеç... Срошнă ĕçе... тан пĕр талăксăр пăхса тухан?

Трихван тархаслама пуçларĕ.

— Турă пул, йулташ нађђалник... Вăрма... килтĕм, лессосакоттовккăра ĕçлетпĕр.

— Мана мĕн ĕç тата... Калатăп сана, пĕр... лăксăр пулмаст. Ыран кил. Вара курăпăр.

... Трихвун çăвар тулли каламалли сăмах... пе вăрçса илђĕ те, тутлăн сурса, килелле т... утрĕ.

П. Пойарки...

## Тасату умĕн.

Йалти комсомолĕс: Партги тасатăвĕ иртсе ... комсомолсен тасатăвĕ çывхарса килет. Тасату п... нађђен парттийе кĕме сайавлени парас пулĕ. Ил...

## Мĕн тумалла?

— Иулташ, ма васкатăн авланма?

— Ђиркўсене хупса пĕтериђђен авланса ве... кĕрсе йуласђĕ тетĕп.

В. Опух...

## Çук пуласшăн.

Кулак.—Иуратнă прэтçетаттĕл йулташ, ĕлĕ... пĕрле ĕçсе çисе пурăнаттăмăр. Хэљ парттийе ... прегçетаттĕл пулнăран вара, мана йалтах ма... Кăшт хĕрхен-ха мана, çуксен çписки çине кĕртсе... çапе хунă 100 пăта каçар.

Прегçетаттĕл.—Ырэнах çука хăварăпăр. 100 тултарманшăн, тырăпа услам тунăшăн, мĕн пур... лăхна туртса илĕпĕр те, вара сана та çуксен ... кўртĕпĕр.

В. Опух...

# Пытарӑнҫӑк вӗҫлӗ калавсем

## Кулаксем ҫараҫҫӗ.

Иӑмракасси кулакӗ, Хриттун Кавӗрли, советсене суйлас вӑхӑт ҫывхарнине сиссе, хӑйӗн арӑмне каланӑ:

— Пӗлтӗр епӗр, кулаксем, йалсовет отҫот тунӑ пухува хӗсӗнсе те пулин кӗркелесе карӑмӑр та, анҫах пире ҫиӗнҫех сирпӗтсе кӑларҫӗҫ.

Малалла апла хӑтланма кирлӗ мар. Хамӑр сасӑсӑррине асрах тытмалла. Ҫухӑнсем хӑйсемех суйлаҫҫӑр. Ҫӑрмантарма йурамасҭ. Колхоссем тума пурин те пулӑшмалла, йала сотсиалисӑм ҫине тӑратмалла, ҫӗнӗ пурнӑҫ тума кулаксем ҫараҫҫӗ...

В Ӗ Ҫ Ӗ

...текенсене хирӗҫ тӑма пирӗн ҫухӑнпа вӑтамсем хушшинҫе ҫынсем пур. Вӗсем совета та хамӑр майлисене суйласа лартма тӑрӑшӗҫ. Ӗҫтерсе—ҫитерсе наккас парса йани харама каймӗха, тенӗ.

## Малалла улӑшӑнӗ.

Ҫӑвашсойусра тавар илес текенсен хуҫӗсем ҫине ал пусса пама пултаракан аллӑ ураллӑ ҫын, хӑйӗн йулташӗсене пухнӑ та, ҫак сӑмахсене каласа савӑнтарнӑ:

— Хаҫатсем ҫинҫе пирӗн йӗркесӗрлӗхсем ҫинҫен ҫылай ҫырҫӗҫ. Ҫырнисем тӗрӗс. Халиҫен хамах пит йӗркесӗр ӗҫлесе пырсаттӑм. Хамӑр слушӑшҫисене анҫах мар, йут ҫынсене те тефитситлӑ таварсем кӗтесле салататтӑм. Иурамасҭ ӗнтӗ апла хӑтланма. Малалла апла тумӑп .. йут ҫынсене памӑп...

В Ӗ Ҫ Ӗ

...Хамӑн хурӑнташӑмсене анҫах парӑп... Хунеме карҫӑксем, хӑтасем, йыснасем, кумасем, пултӑрсем, пӗрлешӗр .. ҭфу!.. „пӗрлешӗр“ мар... пӗрерӗн-пӗрерӗн, йерипен ман пата килсе кирлӗ таварсем илсе кайӑр!.. тенӗ...

## Турра ан ӗненӗр!

Пуп Карҫевски ӗненекенсен пухӑвӗнҫе хыттӑн вӗрентсе каланӑ:

— Тӑванӑмсем! Хресҫенсем! Иулташсем! Ак мӗн калас тетӗп сире.,. такҫанах калас тенӗҫҫӗ те... калама тытӑнарах тӑмалла пулҫӗ.. Тӑванӑмсем, турра ан ӗненӗр, турӑ пур йапала мар, ҫук йапала...

В Ӗ Ҫ Ӗ

текенсемпе ан йавӑҫӑр. Кашни килӗрен ҫӑм, тырӑ, тир пухса парӑр. Турра ӗненме хушманнисен сӑмахӗсене итлемесӗр, ҫиркӳве нумайрах ҫӳрӗр. Вара сире пӗлӗт ҫинҫе пысӑк сӑвап пулӗ, Авраампа, Иссакпа, Иаккӑвпа пӗр сӗтел ҫинҫе йашка ҫисе лармалла пулӗ... тенӗ.

## Курӑссене йӗпетмӗп.

Ҫанкассинҫи (Шупашкар районӗ) аласталӑх коппӑраттивӗн курӑс салатаканӗ Калашнӗк ҫӑпта ҫапакансене пухнӑ та, йӗркеллӗн тӑнлантарнӑ:

— Халиҫен епӗ пӗре те йӗркеллӗн ӗҫлемерӗм. Епӗ йӗркесӗр хӑтланнӑ пирки, тем пек тӑрӑшса ӗҫлесен те, сирӗн ҫӑпта виҫи тухмасҫҫӗ, мӗншӗн тесен курӑса епӗ лаххан ӑшӗнҫи шывпа йӗпетсе параттӑмҫҫӗ... Курӑссенҫен шыв тумлаҫҫӗ, халӗ шыв тумлас ҫук... курӑссем ..

В Ӗ Ҫ Ӗ

.. пӑрпа хуйӑрланса ларӗҫ, мӗншӗн тесен хӗллехи сивӗсем ҫывхарҫӗҫ .. тенӗ.



## Сылтӑмри

— Пирӗн йалта кулак пурри палӑрмасҭ.

## Милитси праҫнӗкӗ иртнӗ хыҫҫӑн

— Кӑҫалхи милитси йупилейӗ майӗпе милитсионерсем хушшинҫе нумайӗшӗ накратӑ илнӗ пек калаҫҫӗ.

— Накратӑ илекенсем ҫылайах пулнӑ. Акӑ сӑмахран Шалти Ӗҫ Комиссариатӗнҫи куҫӑр Крикорйӗв, хула милитсионерӗ Иевстафйӗв т. ыт. те.

— Ку куҫӑрӗ хӑҭ ларҫӑк ҫинҫе лайӑх ларса ҫӳренӗшӗм илнӗ пулӗ, леш Иевстафйӗвӗ мӗнле паллӑ ӗҫшӗн илҫӗ-ши?

— Мӗн калаҫатӑн Иевстафйӗвпа? Унӑн саслукӑсем темӗн ҫухлӗ те,—вӑл милитсире нумайӗҫлет, тата кӑҫал Комунпайӗн карта тытма хатӗрленӗ хӑмисене „йапӑхса выртнине кура“ ҫылайӗшне хӑйне килне куҫарҫӗ.

— Апла пулсан хӑма вӑрланӑ пулаҭ-и вӑл?

— Иепле вӑрланӑ? Вӑл вӑрлани мар, вӑл ҫынсем курман вӑхӑтра хӑй килне куҫарни анҫах пулаҭ. Ун ҫинҫен пӳҫлӑхӗсем те ҫаплах шутлаҫҫӗ.

— Нта!..

**Ҫавӑнтисем.**

## Пит тӑварлӑҫке.

— Мӗн ҫул тӑраҭ ку какай?
— Ҫав 35 пус тӑраҭ.
— Пит тӑварлӑҫке апла.
— Тӑварлӑ мар ҫав, куран пулӗ—хурглӑ.

# ПĔРЛЕ ÇАМАХ ХЫПАЛАНÇЕМ

## Ђленсене хĕрхенме тивĕçлĕ.

— Уђрештенисемпе органисатсисенђи культтурнĕнсем! Есĕр Шупашкарта ĕçлетĕр пулсан сире ђунтан вартан хĕрхенмешкĕн тивĕçлĕрен те тивĕçлĕ. Асаплантарса пĕтерет сире Куçмин йулташ Опрофсоветра ĕçлекенни. Културсовешђанисене вăл çакăн пек пысăк повесткăсемпе тăваť.

27 ноября с. г. в 12 час. дня состоится культсовещание союзов с следующей повесткой дня.

1. Об организации клубной секции при К. О. ЧСПС.
2. План перевыборов бюро профсоюзных кружков физкультуры.
3. Организация временного бюро физвулькуры при КО ЧСП'.
4. О профсоюзной работе среди детей членов союзов и наказ 1 го Краевого слета.
5. О ходе по ликвидации неграмотности.
6. О вводных курсах в производстве
7. О подписке на газету „Труд" и др.
8. План радиофикации.
9. О составление культсмет.
10. Рассмотрение смет межсоюзных клубов.
11. О профпропагандистах.
12. Сеть профпросвещения.
12 Об организации „ТЕХМАСС".
14. Разные:
   а) антиалкогольная кампания
   б) о поездке Москва—Чижний

Зав. Культотделом ЧСПС **Кузмин**,

Куçмин йулташ, миçе çăкăр ђикĕе пымалла ку повестка сӳтсе-йавма? Есĕ ху хăť, културпайĕнђе ĕçлекенскер, „тухховнăй пишђапа" та тăранса пурăнăн, ыттисем унпах тутă пуласшăн мар, кăнтăрлахи апатсем те, каçхи апатсем те çийесшĕн шелмăсем!

## Йумахри пек йăвăр сатани.

Парттипе Совет влаçĕ йалти мĕн пур тӳлевсене пĕтĕмпех васкаса пухса пĕтерес тенине аса илсе, Хĕрлĕђутай РĔКĕ те вăл тĕлĕшпе калама çук васкавлă хутсем йараť:

Красно-Четаевский РИК № 217 — ПУР ИАЛĔÇТĂВ КОМСЕНЕ ТЕ.

Сире тепĕр хут хушатпăр 10-мĕш окťапĕрђен сулăм укçине пĕтĕм нетоимккине пуçтарса пĕтерĕр.

РИК претçетаттĕлĕ **Кортейĕв.**
11/X-29 г. Райфинпай **Илйин.**

Хутне окťапĕрĕн 11-мĕшĕнђе çырнă, пуçтарса пĕтерме хушаççĕ 10-мĕшђен.

Нетоимккăсем пухма кун пек приккассем пани килешсех каймасť. Хăна пухас пулсан, сăмахран, çакăн пек... хушусем йама йураť:

— Кортейĕв йулташ, ђей ĕçме пырха ман пата. Ыран мар ĕнерех пыр. Ĕнер пымасан, çиллентĕп...

## Патронсем.

Пĕр йулташ Хĕрлĕђутай райĕçтăвкомĕ йалĕçтăвкомсем патне йанă 89-мĕш номĕрлă хут çинђе çырнисене тăнлантарса пама ыйтаť.

Красно-Четаев. РИК предлагает Вам представить сведения о состоянии опеки, усыновения и патронаты по Вашему СИКу с указанием подопечных, сколько усыновлено за год, сколько имеется всего усыновленных, сколько патронировано и сколько человек всего находится в патронате.

Пред РИК **Лазарев.**
Инструктор **Иванов.**

Мĕне пĕлтерет „патронат" тени тесе ыйтаť йулташ Çавна та пĕлместĕни. „Пире çырса пултăр —ытти—хăтти пирĕн ĕç мар" тени пулаť, хаклă йулташăм „Патронировано' тенĕ сăмах шалу тенĕ сăмахпа кăштах çыхăну тытаť пулмалла.

## Хеопс пашнипе ревиçи

3500 çул ĕлĕкрех Иекипĕтри Хеопс пашнине туни аса килет. Çав пашђана 360 пин çын кашни кун ĕçлесе 20 çул хушшинђе тин туса пĕтернĕ. Пысăк пирки (унăн çӳллĕшĕ 147 метр) ăна ђас туса пĕтереймен. Пысăк йапалана ђас (хăвăрт) туса пĕтерме пулаймасť çав Ав Çелкрегтойуса окťапĕрĕн 4 мĕшĕнђен пуçласа ку таранђ ђен те ревиçи тăваççĕ, тесе пĕлтерет пире пĕр кореспотент (нойапĕрĕн 20 мĕш ђислинђе). Ревкомиççире и к ĕ çын. Пĕри— Çĕрпӳ районĕнђен Макарĕвски, тепри Улатăр районĕнђен Ђеккурин. 2 мĕш уйăх ревиçи тума йураťши; вăл «наклатной расхот» пулмасťши, ревисорсене унта шалу тӳлеççĕ вĕт! Çаксене ђасрах „Капкăн" ăшне хупма йураť пулђ тетĕп, тет кореспотент.

Хупма йураť те, ытла сĕтĕрĕнђĕкçке вĕсем. Хупсассăн, сĕтĕрĕнђĕк пирки, тухасшăн та пулмĕç.

## Улшуçă.

— Сирĕн уђиттĕл майри акушерккă мар пулĕçке? Хĕрарăмсем питĕ нумай çӳре пуçларĕç.

— Çук, аккушеркка пултараймасť вăл. Уђиттĕлĕ улшу (мыттарнĕк) ĕçĕпе хăтланаť. Çавăнпа хĕрарăмсем нумай çӳре пуçларĕç.

— Мĕн таварпа улшу тума пуçланă вара?

— Прислукăсемпе. Кашни икерне хушшинђе улăштарма пуçларĕ,—страхховаť туса, токăвăр туса укçа тенкĕ ан пĕттĕр, тет.

Çакăн пек калаçу илтме пулаť Çĕрпӳ районĕнђи Туса шкулĕнђи Çеменăв уђиттĕл çинђен. Калаçуне илтме пулаť те, профупполномођĕнăй пурри çинђен илтме пулмасť. Те пур вăл, те çук. Пур пулсассăн та тĕп сакайне кĕрсе ларни паллах.

## Тӳрĕ пымасť,

Пăрмас копператтивĕ (Куславкка районĕ) прикашђĕкĕ, сулахай сулăнђăк ан пултăр тесе, тепĕр йенелле тайăннипе, сылтăмалла пăрăнса кайнă.

Прикашђăк кулаксене таварсем нумайрах параť, кĕтмекле параť. Ђухăнсене тавар парасшăн мар, тет В-ни.

Сылтăмалла пăрăнса кайнăскер кайтăрах ĕнтĕ вăл хăй çулĕпех. Унăн вырăнне урăх прикашђăк тупăр... пăрăнманнине, çул пĕлекеннине.

## Урал тăвĕ.

Виçкассинђи (Иетĕрне рай.) Уралђски йулташ сыхлăх ĕçне йураťаť, мĕншĕн тесен йалти халăхран сыхлăх фонђĕ валђи пуçтарнă укçана, йалсоветне памасăрах, Шупашкарти совпартшколта вĕренне çĕре ђĕлĕм-пирус туртма илсе кайнă, тет пĕр çул çӳрекен йулташ.

Урал тăвĕн вăрăмĕш 2120 километр, çӳллĕш (вăтамран) 425-530 метр. Çав тери пысăк Урал тăвĕнђен те пысăкрах Уралђски йулташăн пысăк ăсĕ пысăк ђейеллĕк туса йал халăхне тĕлĕнтерне.

# ТĔРЛĔНЕ КУЛĂШ

### Хыçкаланас пирки.

— Пит ĕçсем нумай. Хыçкаланма та вăхăт çук.

— Манăн апла мар—хыçкаланма вăхăт нумай та, ĕçлеме вăхăт тумаймастăп.

### Паллашу.

Ку кăрђанка ăçтан тупса килтĕн?

— „По снаккомству“.

### Манăçле çын.

**Упăшки.** Темĕскер— йулашки вăхăтра манăçа тухма пуçларăмçке... Уђрештенире...

**Арăмĕ.** Мĕн манса хăвартăн?

**Упăшки.** Ĕçлеме.

### 5 тенкĕ вçат‹ă.

(Пулма пултарат).

Пађĕ пиллĕк.
Илтĕм пиллĕк.
РКИ пиллĕхĕпе
Тытрĕç пиллĕкпе.
Пађĕç пиллĕк.
Патăм çĕр те пиллĕк.
Илтĕм ирĕк.
Илеп пиллĕк.

### Финанс Комиссариађĕ тавра.

— Ђăваш финанс комиссариатĕнђи йађейккă налок комиççи кулаксене хÿтĕлесе ĕçленине курнă та, аӊђах ђарас тесе шутламан.

— Шутлассиве шутланă пуԉ те... аӊђах ђарма условисем пулман вĕсен.

— Ма пулман?

— Пулман çав! Иађейккă çÿлти хутĕнђе ĕçлет, налок комиççийĕ айалта. Çÿлти хутран айалтисене ђарма 3 ђалăшлă алă кирлĕ, кусен аллисем нихăшĕн те 55—60 сантиметртан иртеймен. Ăçтан ђарăн!

### Шалти ĕçсен Комиссариатĕнђе.

— Сирĕн уђрештенире хорта йурлакансем нумайи?

— Нумай.

— Мĕнле йурă йурлама йуратарах параççĕ?

— Атминистратси йуррине.

### Çĕрле.

— Пăхха ђÿређе витĕр. Васли Иăванĕ, парттире тăрат пулин те, ђăркуççи çине тăрса каçхи кĕлĕ тăват.

— Ђÿређерен ан курђăр тесе, ђăркуççи çине тăнă ĕнтĕ.

### Рапис правленинђе.

— Илемлĕх тĕлĕшпе ĕçлекенсен сойусне кĕрес тетĕп.

— Арттиси ес, хутошнĕки?

— Арттис та мар, хÿтошвĕк та мар, çапах илемлĕх тĕлĕшпе ĕçлетĕп.

— Мĕнле?

— Илемлĕ ресоԉутсисем çыратăп.

### Килти калаçу.

**Ашшĕ.** Ађам, лавкка кайса пирус илсе килха?

**6 çулхи ывăлĕ.** Ху кай! Саншăн пирус патне ђупма сан слушăшђи мар.

### „Волоккиттăпа“.

**Савхос.** Ађуттă, хăйă ђĕлме мăн çĕçĕ илсе парами?

**Сторошиххă.** Кирлĕ мар.

**Савхос.** Мĕнпе вут ђĕртен?

**Сторошиххă.** Волоккиттăпа.

### Иккĕш ик йапапа.

— Пирĕн претçетаттĕлпе çекреттарĕн пĕрпĕринпе килĕшсе ĕçлени çук.

— Ну?

— Пĕри пĕр йапала тăват—тепри—тепре. Çекреттарĕ самооплошени укçипе хурал пÿрђĕ лартма план тунă, претçетатгĕлĕ самооплошени укçипе пÿрт тунă (хăйне ваԉђи).

### Нађар токлат хыççăн.

— Токлат хыççăн сирĕн йалта 3-мĕш сайом лайăх саланђи?

— Сайомĕ саланмарĕ, халăхĕ лайăх саланђĕ.

### Таркăн.

— Сирĕн çекреттар, ĕç нумай тесе, тарнă теççĕ.

— Ĕç нумай тесе мар, раструттă пуԉĕ тесе...

### Пĕçертекенсем.

— Мĕншĕн кулак Кавриллăв йађейккă çекреттарне вут тĕртсе пĕçертесшĕн пулнă?

— Мĕншĕн тесен çекреттарĕ тырăпа услам тунăшăн хăй ăна пĕçертнĕ.

### Фискуԉттур ĕçĕ.

Тутаркас районĕнђе фискуԉттур инструктăрĕ Лаптĕв фискуԉттур икерне лĕхне ир термен.

— Мĕншĕн сирĕн районра фискуԉттур икернелĕхне туса иртермен. Иртерме çанталăкĕ лайăхђĕçке. Хĕвел пăхађĕçке!

—Çанталăкĕ лайăх, хĕвелĕ пăхнă, аӊђах инструктăрăн пуçĕнђе хĕвел пăхманçке, çил çеç шăхăрнă.

### Кулакпа пуп.

**Пуп:** Хлепосакотовккă ђухне есĕ миçе пăт патăн, Çитăрђă?

**Кулак:** 300 пăт, таса атте.

**Пуп:** Есĕ апла, Çитăрђ, совета йуратанçке?

**Кулак:** Иуратмалла пуԉĕ—тыррине путвала пытарнăскере шыраса тупрĕç... Л-н.

### Ăнтавăшри калаçу.

— Ыгла та хăрушăçке ку кĕпер урлă каçма, ма çĕнĕ тумастăр?

— Çĕнĕ тусан çуркунне пăр ватса кайасран хăратпăр.

# Миљђанпа Çимйан

Миљђанпа Çимйан питĕ те туслă пурăнаççĕ хулара. Хутра ситре пулаççĕ пĕр-пĕрин патĕнђе хăнара. Тĕрлĕрен пухусене çÿреççĕ пĕрлех. Çаптараççĕ вара пухура пĕр пулсах „вирлех“.

Пайан вĕсем ĕçлекен уђрештенири партти йађейккине тасатмалла. Кунта ĕнтĕ Миљђанпа Симйан та пулмалла. Партти ђленĕсене ку тасатура вĕсен хыçмалла. Паллах, пĕрин хыççăн теприн тухмалла.

Тасату пуçланђĕ. Пуху лăпланђĕ. Тухса каларĕ пĕри хăй пурнăçĕ çинђен Пуçланђĕç ыйтусем кун хыçĕнђен

— Ĕçместĕни?—ыйтрĕ Миљђан.

— Хуликанла ĕçсем тумани?—ыйтрĕ Симйан.

— Асусем пуйани?

— Çыхăну тытатни вĕсемпе.

— Халăх хушшинђе мĕнле ĕçсем ĕçлетĕн. Сапаççĕ çеç ыйтусем Миљђанпа Симйан. Ыттисене сăмах та памаççĕ. Иулташсем пăхса кăна лараççĕ. Пĕрпĕрне вăрттăн кăт-кăт тĕксе пăхаççĕ.

— Такăнтараççĕ, вĕт!

— Пултараççĕ...

Сÿтсе-йавма тытăнђĕç çынна. Лайăх ĕçленĕ ђлен. Примерлă парттийтсă. Тухса калакансем пур те лайăх йенне кăтартаççĕ. Ђерет çитрĕ Миљђана. Тапратрĕ çаптарма:

— Иулташсем, епĕ нумай ђарăнса тăмастăп. Кунта пурте хÿтĕлесе калаçаççĕ. Епĕ ун пеккисене ђăтма пултараймастăп Тÿррине тÿрĕпе калас пулаť. Иванов партти ĕретĕнђе тăма тивĕçлĕ мар.

— Мĕншĕн? Факты!—илтĕнеççĕ сасăсем.

— Факты?! Кăтартăпăр... Пирĕн мăн муђи каланă тăрăх, Ивановсен аслăашшĕсем питĕ те пуйан пулнă: ташĕ вĕсен авал...

— Халђ?

— Халђ... Иванов ĕçместĕп, тет. Пĕркуне епĕр Симйанпа ÿсĕрпе вăрçнă ђух урамра пирĕн çумранах иртсе кайрĕ. Хăйĕнђен пĕтĕм сăра шăрши çапаť.

— Хăвăртан кĕнĕ пулђ?

— Ан хÿтĕлесе ларăр. Епĕр наопорот вăл кун Симйанпа сăра ĕçмен.

— Ма ÿсĕрĕлнĕ?

— Сире мĕн ĕç?!

— Лар!..

„Лайăх пĕçертрĕмĕр вĕт“ хулхаран пăшăлтатрĕ Миљђан Симйан çумне пырса ларса.

Ђерет çитрĕ Симйана.

„Лайăхрах пĕçерт“ ђĕпĕтсе йађĕ Миљђан.

— Иванов питĕ те лайăх çын!—пуçларĕ Симйан.—Уна пурте пĕлетпĕр. Анђах... Анђах... Анђах...

— Хуликан вăл!—вырăнтан пулăшрĕ Миљђан.

— Та, хуликан вăл!—йарса тытрĕ Симйан.—Кĕркунне урамра ђупса пыраť. „Ăçта кайатăн терĕм. „Саңаттине“ тет. Саңаттине кам ђупса çÿрет?! Вăн: пысăк ђынлă ç ы н с е м мĕнле вашнă утса пыраççĕ саңаттине пынă ђух. Иванов ђупаť. Снађђăт хуликан. Тата пĕркунне арăмне—Ђурăђкă! тесе ђĕнет. Мешђанствă! Пирускисене çурри туртсанах сÿнтерет. Вретиттĕл! Тапак ахалђ çитмест. Вăл апла хăтланаť. Çулла старовă тунă ђух картусне илме ÿркенсе çара пуçăн çÿрет. Страшнăй лентăй. Тÿммесĕр кĕпесем тăхăнаť — раскилђтайствă! Сурнă ђух нихăçан та çĕре сурмасť,—тошĕ мешђанствă!

— Пĕтеретни?

— Çитет!—илтĕнеççĕ сасăсем.

— Ну, пĕтертĕм! кайса ларђĕ вырăна Симйан.

„Тивертрĕн вара“ пăшăлтатса илђĕ хăлхаран Миљђан.

Тасату кĕçĕр икĕ сехетђен пыђĕ. Малтан пынă çынсем пурте пур. Анђах çук кунта Миљђанпа Çимйан. Тухса кайнине никам та курман.

— Айта кайатпăр!

— Айта...

Пăшăлтатса илђĕç хăйсем тухса каланă хыççăн Миљђанпа Çимйан.

— Айта, çав, пĕркунђенхи карђăк патне.

— Сан пури укçа?

— Йкĕ путылккă илме çитет.

Карђăкăн сарă кĕреке. Çутăлса çеç лараť çутă ереке.

— Укçа кипĕл!

— Укçа куп!

Кăçкăраççĕ Миљђанпа Çимйан. Вĕсем çине текех ыррине ан шан!

— Ма вĕçен?

— Есĕ ма шалт ĕçен?

Тапранђĕ тавлашу.

— Есĕ ху...

———

Пуçĕсене тутăрпа çыхнă. Пыђĕç виçĕ кунтан ĕçлеме.

— Лаша тапрĕ,—терĕ Миљђан.

— Кирпĕђ ÿкрĕ,—йевитлерĕ Симйан.

**Ç. Шăпђăк.**

---

**Тăпăртанра (Канаш р.) Крађђов, парттире тăракансер, копперативва пынă çынсене „тавар мĕншĕн ç телĕклĕ мар“ тесе ыйтсан, каласа ăнлантарас вырăнне, вĕсене лапккаран хăваласа кăлараť.**



## Крађђов-„пропакантис1“.

**— Тавар мĕншĕн çит лĕклĕ мар? Ăнлантарса парха.**

**— Иурĕ... Ăнлантарса парăп. Анђах епĕ ораттăр маррине пĕлетĕн. Çавăнпа тапкăпа ăнлантарса йарам. Ак, сана! Ак сана!..**

# Ыйтусемпе ответсем.

**Флерăв ыйтă**: Пĕтĕм тĕнђери патшалăхсем пĕрпĕринпе тунă сутуилӳ опорођĕ миçе тенке çитет?—тет.

**Хирĕç калани**: Пĕтĕм тĕнђери патшалăхсен çулталăкри опорођĕ 75 444 000.000 тенке çитнине пĕлетпĕр Вăл хисепе Мниçырми йалĕнђи (Куславкка районĕ) партти ђленĕ Танилăв Иван П кĕш йалĕнђи Иефим Çитăрăва 25 пăт ыраш сутса опорот туни кĕмест. Районри опорота та кĕмен вăл, мĕншĕн тесен ăна вăргтăн тунă.

**Сĕнтĕрвăррисем ыйтă**:—Тĕнђере ђи йăвăр йапала мĕскер?—тет.

**Хирĕç калатпăр**: Çириус йатлă çăлтăр пур. Çав çăлтăр пирĕн çĕр ђăмăрĕ çинђи шывран 50.000 хут йăвăртарах (шывне те, Çириус татăкне те пĕр пек илсе виçсе пăхсан). Сĕнтĕрвăрринђи хăшпĕр партти ђленĕсем (Шекалин, Шекалинă, Софронăв, С а н а ђ ђ и н, Вађушшов, Ђукçинă) — хăна т. сагнă хыççăн ђисткă сопранинђе ларасси Çириусран йăвăртарах теççĕ. К и н о н а, йе киле тухса тарма çăмăлтарах, теççĕ. Вĕсем каланине вĕреннĕ çынсем тĕрĕслесе пăхман.

**Пĕри ыйтă**: Сутă миçе километтр кайать пĕр çеккунтăра?—тет.

**Хирĕç калатпăр**: Сутă пĕр çеккунт хушшинђе 300 000 километр кайать. Кĕвенте çăлтăр çумĕнђи „хуркайăк çулĕ“ текен çăлтăрсенђен килекен çутă пирĕн пата 590 çултан çитет. Ăна пĕлетпĕр. „Шăмăршăри турра ĕненменсен райсоветђĕ“ йатлă çăлтăр çути Шупашкарти Турăсăрсен Ђăвашсовет патне хă ан çитнине пĕлместпĕр. Райсовет уçăлни çинђен Ђăвашсовет хыпар илтнĕђĕ, анђах çути халĕ те çитеймен (пĕр хут та çук—тепĕр майлă каласан) 500 çулђен çитĕха, мĕншĕн тесен, пирĕн шухăшпа, Шăмăршă кĕвенте çăлтăр çумĕнђи „хур кайăк çулĕнђен“ Шупашкара çывăхрах пек туйăнать.

**Ђăм-ђăм“ ыйтă**: — Куçпа пăхса та палăрман йапала ем ђăнах та пурши вара тĕнђере?—тет

**Хирĕç калатпăр**: Пур, ађам, пур! Сăмахран пактерисем куçа палăрмаççĕ. Пактерисем пĕђĕкçĕ пирки куçа палăрмаçĕ. (1 милиметр пысăкĕш вырăнта 2.000 ытла пактери вырнаçтарма пулать). Пактерисем пекех Апашри (Шуп. р) комсомол йађейккин йал хушшинђи ĕçĕсем те палăрмаççĕ, мĕншĕн тесен. . унăн тырпул пухас тĕлĕшпе ĕçленĕ ĕçĕсене 1 милиметтăрăн 2 000 мĕш пайĕнђех вырăнаçтарма пулать. Ђи пĕђĕк йапаласем куçа курăнмаççĕ вара вĕсем.

**Шуçăм Вађукĕ ыйт і**:— Манăн пĕр йулташ сђетовот ĕçне лайăх пĕлет Мăн-Сĕнтĕрти „Паххăр“ копператтивне сђеттовот пулма илĕçши ăна?—тет.

**Хирĕç калатпăр**: Илмеççĕ. Мĕншĕн тесен кастармаллăх çÿçĕ çук сан йулташун Çÿçĕ пулсан илеђђĕç. Йăван пупа ав вăрăм çÿçшĕнех илнĕ сђетовота. Кирлĕ пулсан çÿçе ӳстермелли емеле çак атрĕспа çырăнса илме пулать: Москва, Тверская, 63 г.

**Лешхайхи ыйтă**.— Икконсемпе кĕрешес ĕç хăш ĕмĕрте пуçланса кайнă?—тет.

**Хирĕç калатпăр**: Христоса ĕненекенсен икконсемпе кĕрешекен йухăмĕ 8-мĕш ĕмĕрте вăйланса кайнă. Раççейре 12 çул ĕлĕкрех икконсемпе кĕрешме тытăнђĕç Асхва йалĕнђе (Канаш районĕ) икконсемпе кĕрешес ĕç халĕ те пуçланса кайайманха. Иалĕçтăвком претçегаттĕлĕ, комсомолĕс пулин те, çелсовет кĕнђелерĕнђе иккон усрать. Асхва йалĕнђе икконсемпе кĕрешес ĕç хăçан пуçланса кайасси паллă мар.

# Е М Ĕ Т.

**Арăмсаве ђас ђасах улăштарса пырас йăла—куђттурлăха хирĕç пыракан тивĕçсĕр йăла.**

П А И А Н:
Ех, Кĕтерне—ђун тымарри,
Пĕрле пурнăç майлари?
Куçу ђакăр
Сассу такăр
Çулăм-есĕ, Кĕтĕрне!

Ы Р А Н
Ђăлт-ђăлт ђăлтăркка,
Çав Кĕтерне пăлтăркка.
Хĕсĕк куçлă,
Ђалăш пуçлă,
Куç ан куртăр ĕмĕрне!

В И Ç М И Н Е (теприн патĕнђе).
Савнă Сађук! Пĕрле пурнар—
Çамрăк ђухне ыр курар.
Пĕђĕк туту,
Ђăмăр çамку
Ђуна лăштах пусарать!

4-МĔШ К У Н Н Е (йурласа).
Кай, кай Ивана
Ма каймастăн Ивана! (2 хут)
Сăмсу лаптак,
Çамку пуклак.. (2 хут)

**Крикорйев А.**



## Ђеринтсăра

— Ой, пăхха! Ашак пур!.. Тарар Токлатсăр кĕнĕшĕн вăрсса пăрахĕ тата!.

*Филиппăв ўкерђĕкĕ.*



## Кулак майлă

— Ку лашана манăн кулак пăхса ўстĕрнĕ пулмалла.
— Ăçтан пĕлен?
— Ара майак лартнă çулпа пынă çĕртех сылтăмалла пăрăнса кайат̆.

---

# Мăн-Тутаркас пуххи.

Тĕксĕмрех кĕр кунĕ, кăш çăмăр ўпкелет. Иал уп-
олномођнăй вăраннă, пуху тăвас шухăш килнĕ. Халăх
тан кунтан тухкаласа йерипен хурал пўрђĕ патне
рĕ. Иерипен халăх пурте пуçтарăнса çитнĕ.

— Ăçта йал уполномођнăй, пухăва пуçлас пулађ-
, вăхăт иртет, ахађ лăпăртатса ларасси ывăнтарђĕ,
ççĕ малтантарах çитнисем.

Иал пуххине такам та пĕлет ĕнтĕ, унта тем тĕрлĕ
ман авăртакан пур, пурне те пĕлекенни те унта пур.
Ђылай çапла йĕркесĕр лăпăртатса ларсан тин таç-
н йал уполномођнăй сĕтĕрĕнсе тухрĕ. Пĕр хул хуш-
инђе тăптулли хут, тепĕр аллинђе пирус. Халăх хуш-
ине таçтан тайлăк урасемлĕ сĕтел кăларса лартрĕç.
ал уполномођнăй ларма вырăн хатĕрлемен пирки, сĕ-
л çине урлă выртрĕ те тапратрĕ: çелисполнителсем
ăрăр. Çынсем ђăр куçран куçа пăхкаларĕç те, мак-
нхи пекех пуш парапан çапма пуçларĕç. Таçтан "йал
рĕнђи çынна парас", тенĕ сасă илтĕнђĕ те йăмрĕ.
ĕç çаплипех пĕтрĕ пулмалла. Йал уполномођнăй
нĕ ĕç тапратрĕ:—налоксем тўлĕр.

«Манăн налок пысăкха» тенĕ сасă илтĕнђĕ те пĕр
мах та урăх илтĕнмерĕ.

Ку ĕç те пĕтрĕ.

— Сайом илĕр, тесе çĕнĕ ыйту тапратат̆, урăх пĕр
мах та шарламаст̆.

Халăхĕ те пĕр сăмах та шарламаст̆, уполномођнăй сă-
хĕ хăлхана та кĕреймен пулмалла, параппана тата
тăрах çапа пуçларĕç.

— Eçсем пĕтрĕç-и? Каç пулат̆! тенĕ сасăсем илтĕ-
не пуçларĕç.

— Пурха пур, тет уполномођнăй, сĕтел çинђен та-
йăлса кайасран йусанкаласа выртса.

Унтан уђитĕл сăмах илђĕ. Вăл та линейккă пырне
çăтнă пек ик-виçĕ сăмах çех: ађасене шкула йарăр,
терĕ те пĕтерђĕ.

Çавна кура ĕçлĕреххисем пулмалла тăра-тăра ки-
лелле шăвăнтарђĕç. Тепĕр йалти уђитĕл ђăтаймасăр са-
йом çинђен халăха ăнлантара пуçларĕ, вăл та пуçлăх-
сăр пухура халăха ним тăна кўртмерĕ. Сайом çинђен
тапратсан пуйаннисем ушкăнпе тухса шăвăнђĕç.

— Ан кайăр-ха, вутă çинђен калаçмалла, терĕ тин
ăйăхран вăраннă уполномођнăй.

Пăхат̆ ăçта кунта виç-тăват çын анђах хурал çурт
кĕтессине ларса йулнă. Пĕтрĕ, тет те уполномођнăй
хут çĕклемне çĕклесе çывăрма утат̆, тайлăк сĕтел хуй-
хăрса пĕђђенех тăрса йулат̆..

Тайлăк сĕтел хађ те пулин тăна илеймест, мĕншĕн
ăна 4—5 сехет хушши асаплантарђĕç. Уполномођнăй
хăй те мĕн ĕç туни çинђен каласа парас çук, халăхĕ
те: ахалех вăхăт иртрĕ, тет пулĕ.

Çавăн пек пухусем Мăн Тутаркас йалĕнђе пулса
иртерĕççĕ.

Пухă çынни.

# Икĕ палла çын.

**Вăрнар райĕçтăвком претçетаттĕлĕ патрак куђĕра, лаша сене пăхма пĕлмест тесе, вырăнтан кăларса лишшентсă—кулак ывăлне Лепĕтĕва илнĕ.**

Вăрнар районĕнђи пасарлă Нурăсри Кăпиттон Митриђ Лепĕтĕва пĕлменнисем пулсан, халех пĕлме тăрăшас пулат, мĕншĕн тесен вăл районри палла çынсенђен пĕри пулат. Вăл ђăн палла хисеплĕ кулак, ун пек кулак ку саманара пĕтĕм районĕпе шыраган та тупас çук. Елĕк ђаплă кулак хисепĕнђе шутланнă Молăстăвпа Тимахви Сахарăђ халĕ Лепĕтĕвăн патушне те тăмаççĕ. Вĕсен мĕн пур снаккомстви те каккой нипуť пулăшком çекреттарĕ йе вăрман стурăшĕ, йе каккой нипуť Ротçевиђ пек сашђитнĕк анђах, Лепĕтĕва по крайни мер районра палла çын РЕК претçетаттĕлĕ Петтăр Çтеппанăђ хăй малтан ала парат.

— Сторова пурăнатăни, Кăпиттон Митриђ? тесе çĕлĕкне илсе ала парат ăна курсассăнах.

Палла çын палла çынпах паллашат çав, ытти пĕђĕк кулаксем Петтăр Çтеппанăђăн сывăхне пыма та хăйаймаççĕ.

Çак икĕ палла çын хушшинђе, нумайах та пулмасť, çакăн пек калаçу пулнă:

— Есĕ, Петтăр Çтаппанăђ, райĕçтăвком претçетаттĕлĕ-и?

— Çавăçке.

— Ман шутпа санăн влаç пит пысăк пулмалла.

— Вăл тĕрĕсех пулмалла.

— Апла пулсан, есĕ пултарайман ĕç пулмалла та мар еппин?

— Хм! хм!..

— Кўр апла пулсан сылтăм аллăна,—терĕ Лепĕтĕв ку самахсене илтсен.

Пĕрне пĕри аллисене парса ђăмăртаса илђĕç те, тапратрĕç йумахлама малалла.

— Итле-ха, Çтеппанăђ, ман нушана: манăн савнă ывăлăм, „кулак ўтĕнђен илнĕ ўт, кулак шăмминђен илнĕ шăмă“ аслă шкула вĕренме кĕресшĕн, анђах хам лишшентсă пирки ăна шкул хапхи патне те йамаççĕ. Мĕн майпа майлас-ши ку ĕçе? тет Лепĕтĕв.

— Ах, Митрĕђ! Ку нуша, нуша пулати? Вăл маншăн пулсан пустуй ĕç анђах. Илсе кил ађăна ыранах райĕçтăвкома. Илĕпĕр епĕр ăра куђђăра, унтан кўртĕпĕр профсойус ђленне, кĕркунне кăмантировккă парăпăр аслă шкула, пĕр пиллĕк çултан курăн вара ху ывăлна йе Ђăссăнххара йе Ђăвашпланра.

— Ку апла та халĕ, йепле майпа кĕртсе йарас ăна куђђăра, тата пушшĕ профсойуса?

— Е, айван, сисместĕн есĕ! Есĕр ĕмĕртенпех йамшăкра çўренĕ виçшер тăватшар парпа. Вăл тĕрĕсех? Тĕрĕс. Ађу санăн куђăр вырăнĕнђе пулнă. Вăл тĕрĕсех вĕт? Тĕрĕс. Куђăр патрак пулаť. Патрака таçта та çул параççĕ. Патрака вытвишентсă туса тем тĕслĕ аслă вырăн параççĕ. Санăн ывăлна та вытвишентсă йĕркипе куђăра илетпĕр.

— Ман ывăла куђăра илсессĕн, халђи куђăра ăçта хурăр вара?

— Пирĕн халђи куђăр патрак пулнăскер лаша тавраш усраман пирки куђăрта çўреме çпетсиалђнăç имет тăваймасť, санăн ывăлу мĕн кĕçĕнренпех йамшăкра ђупса çпетсиалис пулса кайнă. Çпетсиалиса çул парас пулаť. Ăнлантăн-и ĕнтĕ ĕçĕн тĕпне тымарне?

— Ннта! Пур иккен тĕнђере пуçсем, — терĕ Митриђ пурне те ăнласа илсе.

Çапла калаçнă хыççăн пĕр икĕ кунтан райĕçтăвкомри куђăра ђухăн ађине кăларса йарса ун вырăнне Кăпиттон Лепĕтĕв ађине кўртсе лартрĕç.

Халĕ райĕçтăвком куђĕрĕнђе çпетсиалис тесе илнĕ кулак ывăлĕ ĕçлет. **Номĕр.**

---

# „Капкăн“ тус!

Мĕншĕн епĕ çав терийех айаплă пултăм ĕнтĕ сан умра? Шăл çеммине сиссе илтĕн те, „Литтераттура лахханĕнђен“ кăларасшăн та мар пулас.

Ан вăрат ирсерен ес ăна
пирки епĕ те ака мĕн каласшăн:
Не буди ты ее на заре—
сăвва 8 çуллă шкулта „çытакпа ђупса çўренĕ“ ђухне пире уђђитĕлсем йурлаттарађђĕç.

Вăл йурăпа сахал мар епĕр карланкăна хырнă. Çавăнпа та вăл йуррăн сăнлăхĕсем ман пуçа вирлĕн вырнаçнă. Сăвă вырăс орикиналĕпе виçĕ тĕлте ђăнах та пĕр пек.

Иулашкинђен: вăл сăвва епĕ çўшетлă уйрăм йапала йевĕрлĕ пиђетлеттермен, поемă сыпăкĕнђен татса илсе „Сунтал“ ретаксийĕ хăй пиђетлерĕ. Поемăна та ун пек мешђенле сыпăксем кĕртме кирлĕ мар пулĕ те, мĕн тăвăн ĕнтĕ...—поемăна çавăн пек шухăшлă тип кĕнĕ...

Шăрпăкран пĕрене туса хуни такама та кўрентермелле. „Симĕс хырăма“ хăйĕн, ăнсăртран персе йанă сăмахĕсене кайалла илме ыйтатăп. Мĕншĕн тесен еп плакиат пулман, Иеççенĕнран пĕр сăмах куçарман. Куçарас та çук. Вырăс опрăсĕсемпе усă курнăшăн (ăна пурте тăваççĕ, тума кирлĕ те!) вăрă йатне илттернинђен йăвăр хисеп урăх çук та ĕнтĕ. Вăрă йатне илтнĕ **И. Тукташ.**

---

# Колхос вăй илет.

Ђетрикри (Елĕк р.) «Ыраш» колхоса «Çырлу уй» касса панă ђух, йал вуттавĕсем хиђĕç тăнă.

Шăннă çĕре капка йур
Нойаврĕте витрĕ,
«Ыраш» ђленĕ Иакур
Мишавайпа çитрĕ.

Ђетрикрĕ ак мишавай
Халăх пуххи турĕ:
— Пăлан тăрăх «Çырлу уй»
Колхосăн вăл!—терĕ.

Тепĕр кунне, ирçинђе
Мишавай çĕр касрĕ.
Куштан-пуйан Иђовђе
Хăй майлине пухрĕ.

«Çырлу уй» каснă çĕре
Çаксем хыт вăшкăнђĕç;
Мишавайа кĕç пĕре
Рыђакпа çапађђĕç.

«Çырлу уй» колхосăнах
Куштансен пулмарĕ,
Иђовђесен «Уммашнек»
Хыттийĕ те пырĕ.

**Хунťакка.**

# Вĕренмелле çыракансен страници

## Сулахай куçпа сылтăм сулăн ђăк туни.

Çĕрпӳ районĕнђи арман хуçисем, кĕреçе çă нăхне вăхăтра патшалăха пани-паманнине тĕрĕсле кен контрођор Тийаккăнăв, нойапĕрĕн 12-мĕшĕнђе Хоса-кассинђе (Çĕрпӳ р.) кĕрпе-салат арманĕ пытанса пурăннине тĕрĕслеме килђĕ. Салатпа кĕрпе арманĕпе ђăнахах 3-4 çул никам пĕлмесĕрех арман хуçи вăрттăн усă курса пурăннă. Анђах контрођор Тийаккăнăв, армана çитсенех, арман хуçи О. Алекçейĕв сăмавар лартрĕ, сăмаварпа йунашар „çутти" те шалт! сиксе тухса, Тийаккăнăв çинелле пăхса ларђĕ. Çутти ăна пăхнине кура, Тийаккăнăвăн пырĕ, аслати авăтнă пек кĕрлесе илђĕ.

Тийаккăнăв пырĕ йантранине илтсен арман хуçин сылтăм куçĕ „мăђ" турĕ. Тийаккăнăвăн та сулахай куçĕ „мăђ" туса илђĕ.

Ĕçрĕç ĕçессе сăра стакканĕпех, ĕçнĕ хыççăн акт çырмалла. Акт çине 3—4 çул ĕçлесе пурăннă салат-кĕрпе арманне: „ку арман 1929-мĕш çулăн октăпĕрĕн 16-мĕшĕнђе çех ĕçлеме пуçланă" тесе çырђĕç.

Анђах актă çине „пыр аслати пек йантранипе çуттине сăра стакканпех ĕçрĕмĕр", тесе çырмарĕç.

Тийаккăнăв йулташăн сулахай куçне хупмалла марђĕ, арман хуçине хирĕç сылтăмне хупмаллађĕ (саншăн епĕ .сылтăм сулăнђăк" тăватăп, тесе пĕлтерме). К.

## Волоккиттăран хăракан

Ђăваш театр тиректăрĕ, волоккиттă пуласран хăраса, ђăваш труппипе октăпĕрĕн 1-мĕшĕнђе тумалли токăвăра нойапĕрĕн 25-мĕшĕнђе тумасť. Кирек мĕн ыйтсан тӳрех сайавлени парăр, еп сăмах волоккиттине йуратмастăп, формађнăçа йурататăп, тет. Вара сайавленине портфĕл ăшне ђикет те, тĕплĕ йатса çӳрет. Пур ĕçе те вăрахăн, хыпаланмасăр, майĕпе тăвас пулаť, тесе çӳрет (портфĕлĕ мар, тиректăрĕ).

Тиректăр мĕн пурĕ те тĕнђере ик йапаларан хăраť, пĕри - волоккиттă пулса ларасран, тепри — ђăваш çпектаккăлĕнђен. Ђăвашла çпектаккăђ пуласса сиссен, хăранипе вăл кун театăра та пымасť. Ђăваш çпектаккăлĕ вађђи хатĕрсене те волоккиттăран хăраса, ним те тупса памасť. Çпектаккăђ пуçланас умĕн ђăваш труппинђи арттисем хатĕр çитменнипе, волоккиттăран хăраса пурте вăрçма пуçлаççĕ.

Çпектаккăђсенђе вара, Ваççилйĕв (тиректăр) волоккиттă пуласран хăранипе, пăшал перес вырăнне, вут сыппи (пулени) йатса переççĕ. Пĕр гумтир вырăнне, йураť тепри те, тесе тăхăнса выђаççĕ.

Тиректăр волоккиттă пуласран хăраса ĕçленипех, ђăваш арттисĕсем ђылай лайăх выђђакансемех т у х с а тарса пĕтрĕç. Ђăваш труппине йут çĕртен паллă арттиссем кӳресси çинђен те, волоккиттă пуласран хăраса, шухăшламасť. Тиректăр ђăваш труппи салансассăн, волоккиттă пуласран хăраса, питĕ савăнмалла. Театăрта ĕçлеме лайăх ĕçлекеннине илсен, шалу хуштарасшăн лешĕ (ĕçлеме килнĕ çынни) волоккиттă пуçарса йарасран хăраса, хула мешђен хĕрне Крашененниккăвăна илнĕ.

Аван çын тиректăр — волоккиттăран хăраť, тата хăйĕн калама çук пысăк шалуне (275 тенкĕ) кăштах ђакарса волоккиттă туса йарасран хăраť.

Кушак.

## Икĕ тус.

Каçпала йалканаш пуçлăхĕпе çыруççи сĕтел хушшине кĕрсе ларђĕç.

— Ну, йулташ Кривоноссăв, пирĕн пайан çынсем çине паранкă хумалла!—терĕ пуçлăхĕ пуçне тайса

— А-а... ăна халăх çинђе, халăхпа тумалла пуђ— терĕ çыруçи шапкине хывса хурса.

— РЕК-ран çавăн пек йанă тегпĕр.

— Ну! йурĕ еппин—терĕ çыруçи килĕшсе.

— Малтан кама хумалла маррисене пăхса тухарха: Кавăрле кума, хуђăма, кĕрĕве, Ваçук туса, тата кама хурас мар-ха? тесе пуçлăх çӳç пĕрђисене тытса шухăшласа карĕ.

— Тата ман хуђăма, Ваçил кума, Маťви хăйматлăха!—терĕ çыруçи çамкине тавăрса.

— Ара, Маťви пуйанçке ха вăл?.. Хумасан кла çулйĕрне тӳрĕ тытса пыман, тейĕç?..

— Сан хăвăн хуђупа Кавăрле кумму та пит пуйан çынсемехçке .

— Е хурас мар еппин ун çине, терĕ те пуçлăх, перус кăларса мăкăрлантарса йађĕ.

Çписка тӳрĕç, йалта пуйансем пурри темле хыт пăхсан та çпискă çинђе палăрмарĕ.

Иник М.

## Тăхăннинђен паллă.

Сутуилӳ комиссарнађĕ йăнăшĕ пирки çакăн пек йапаласем пулкаланă.

— Кам çав хитре шурă тăхăннăскер?

— Ар-а, вăл Тађук хĕрĕ-иç!

— Мĕншĕн вăл копператтив умнелле утаť.

— Ар-а, вăл усламăç хĕрĕ пулнă та ăна çитсă параççĕ.

— Ар-а, усламăççене памаççĕ вĕт, ђлենсене параççĕ.

— Ар-а, вĕсем 30 пăт ыраш патшалăха панă. Ăна савăнпа параççĕ.

Çут-ка.

## Пирĕн копператтивра.

Кĕр те иртрĕ, хĕл çитет,—
Сивĕ хыгă ђĕпĕтет,
Пирн лавккана пыр та кур—
Çава, çурла пурте пур!

———

Вăл лавккана тупмашкăн
Çĕрĕк пулă пулăшаť—
Унăн шăрши пит каскăн
Çур çухрăма сарăлаť.

Пăђăр.

Ҫăваш пролеттари писсаттелĕсен илемлĕ литтературă, криттĕкă тата искусствă ШУРНАЛĔ

# СУНТАЛ

12-мĕш №

КАПКĂН вулакансем ваҫҫи йатарласа кулăшларан кулăшла

# „СМЫҪКĂ“

йатлă Ҫеркей Елексантăрĕ ҫырнă 2 карттинлă комети пиҫетлесе кăларат.

Кам та кам „Капкăн“ вайне стсенă ҫинҫе кăтартас тет, „Сунталăн“ теккапĕрти №-рне ҫырăнса илĕр.

Кам та кам „Капкăн“ веҫҫĕрĕсене вирлĕ иртерес тет—„Сунтал“ ҫырăнса илĕр.

Пйессăллă „Сунтал“ йенне кăмăлăр туртат пулсассăн—ҫитес 1930-мĕш ҫулта татах та кулăшла 3—4 пйессă пиҫетлесе кăларăпăр.

„Сунтал“ „Капкăнăн“ аслă пиҫҫĕшĕ. Вĕсем иккĕшĕ те ҫăваш илемлĕ литтератгурине шаккаса тăртакансем. Тимĕрҫисем—ĕҫхалăхĕ, вулакансем есĕр. Вĕркĕҫлесе татах вĕрилентерĕр тимĕрҫ лаҫҫи не—„Сунтала“.

Кулаксене, ĕҫе ҫăрмавлакансене волоккитҫĕкпўрократсене, пупсене—ĕҫсыннин мĕн пур тăшманĕсене ваҫҫи лайăхрах тăрăнакан сăнăсене ҫивҫĕлетсе хатĕрлер.

„Сунтала“ ҫăвашсен мĕнпур пал рнă литтераттăрĕсем ҫырса тăраҫҫĕ.

**Повĕҫ калав** ҫыракансем: Трупина М., Иссайĕв М., Патман, Хумма Ҫеменĕ, Пинер, В. Толковиҫ, Акаккăв-Линҫ, Цаймен, Йуман, Арис, Тăхти, Йалавин, т. ыт.

**Пйессă ҫыракансем:** Танилăв М. (Ҫĕпĕр), Ф. Павлăв, П. Н. Оҫиппăв, Лашман, Айсмăн, Мраҫкка, Лҫава Платтунĕ, т. ыт.

**Сăвăҫсем:** Тукташ, Хусанкай, Уйăп М. Йанкас, Ваҫанкка, Ефел, Кели, Алакĕр, Петтокки, Шупуҫҫынни, Шелепи т ыт.

**Мыскараҫăсем:** Иван-Муҫи, Шăпҫак, Аттай, Йевтоккимăв, Калай, Ҫурпай, т. ыт.

**Пуплитсиссемпе криттĕксем:** И. Кусҫнетсов, Арк. Солăттăв, А. М. Миххайлăв, Н. Солăттăв, М. Алексейĕв, т. ыт.

Кусемсĕр пуҫне, шурналта АХРР-ăн ҫăваш филиалĕнҫи хутошнĕксем, Вĕренўлĕхпе Кулҫтур Канашĕн ҫленĕсем ĕҫлеҫҫĕ.

ХАКĔ ЙУНĔ: пĕр № рĕ 25 пус, 3 уйăха 60 пус 6 уйăха 1 т. 10 пус, ҫулталăка 2 т.

„Сунтал“ илме ҫырăнсассăн выҫавра пўрт пури, лаша, плук, йе путилник ҫасси илессе шанма пултараҫҫĕ.

## Ăслăлăх кăтартса панă тăрăх

„Капкăн“ шурнала вулакансем пурте кăмăллă халăх. Ҫавăнпа шансах тăратпăр, вĕсем пурте

## „ХАТĔР ПУЛ“

шурнала хăйсен аҫисене ҫырăнса илсе парĕҫ. Шкопă, калас пулат, кашни пионерăн, кашни шкул аҫин сумккинҫе

## „ХАТĔР ПУЛ“

шурнал пултăр.

Хакĕ йунĕ ҫулталăка 1 тенкĕ, 6 уйăха—55 пус, 3 уйăха—30 пус.

## Уйăхра пĕрре тухакан

## „ĔҪХĔРАРĂМĔ“

шурнала илмен хĕрарăм пĕрре йулмалла мар.

Вăл шурнал хĕрарăма халăх ĕҫне ĕҫлеме вĕрентет, совет панă ирĕкпе пурнăҫа йусама ҫул кăтартат, аҫа-пăҫана сывă ўстерме, кил хушшинҫи вак-тĕвек ĕҫсене майлаштарма пулăшат, вырăнти пурнăҫа ҫутатат, тата урăх та нумай унта кирлĕ йапаласем.

Хакĕ унăн хаклă мар: ҫулталăка—1 тенкĕ, 6 уйăха—55 пус, 3 уйăха—30 пус, 1 уйăха—10 пус.

**Ҫырăнса илмелли атрĕс: Чебоксары, Канашская, 15. Конторе газеты „КАНАШ“.**



Ответлă ретактăр **А Ваҫҫил ĕв.**

Чувашлит № 2232. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“. Нап. 4600 экз.



## Ĕçлемен çекси

**Иалсовет çексин претçетаттĕлĕ** (анасласа]: Иалсоветсене суйлас срока тăснă. Каллех выртас пуль çывăрма!.. О-а-ах!...